С(чув)
33
-33677

# ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

## ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

* * *

Или! Или! Лима савахвани!..

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Пăталарĕç тăван çĕршыва.
Эп, ăна виличчен саваканĕ,
Çăлăнăç патнелле йĕр хывап.

Пуш хирте пĕр-пĕччен ун хĕресĕ,
Хăйăра сăрхăнать чĕрĕ юн.
Ăна йӳçĕ эрех ĕçтерессĕ,
Хупăнать, хупăнать куçĕ ун.

Таврара хурахсем ахăраççĕ,
Тӳресем кăмăллăн кулкалаç.
Çаруранлă çĕршыв макăрать-çке,
Ун çине витĕнет тĕттĕм каç.

Ĕмĕрлĕх, юлашки каç пекех-çке,
Ĕмĕрех пăрахас пек хĕвел.
Кăлкансем ахлатса пуç пĕкеççĕ,
Вĕсене те мĕскĕн çĕршыв шел.

*

Янк уяр кĕрхи каç çĕр чĕтрерĕ,
Çӳлтен мар, çĕртенех пĕр мăн сас:
— Эй, эсир, выççисем, итлĕр! — терĕ, —
Итлĕр, кам пурăнмашкăн хавас!.. —

Ман çĕршыв хĕресне аçа çапрĕ,
Куçне уçрĕ çĕршывăм, пăхать:
Хăй пекех мĕскĕнсен йышлă çарĕ
Ун патне юрласа çывхарать.

Çитмĕл çич чĕлхепе саламлаççĕ,
Ыталаç, чуптăваç пĕр-пĕрне.
Сӳтĕл, татăл, асап саламачĕ,
Чура мар эпĕр тек ĕмĕрне!..

Чĕрĕ юлнă çĕршыв сасă пачĕ,
Эп пĕлеп: ун сасси уçах мар.
Ун суранлă ырхан сăн-сăпачĕ
Илемлех те пек мар пуççапма.

Анчах ун чăтăмĕ, чун хавалĕ,
Ун асапĕ... çакна кăшт пĕлсен —
Кам мана тĕнчере, кам-ши калĕ
«Çĕршыву санăн халсăр» тесе?!

[1921 ç. çуркунне]
Шупашкар

* * *

Катаран каç килсен, каçхи кунăн мĕлки
Уйсене ыйăхпа хупласан,
Йĕркерен-йĕркерен тĕрлĕ шухăш йĕрки
Пуçăма пуçтарна пуçласан, —
Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки
Куçăма курăнать аякран.

Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хушшинче
Чăваш çĕрĕ мана курăнать:
Ман çĕршыв хĕрлĕ юнлă хĕрес çумĕнче
Çакăнса, çыхăнса тăраять.
Кăмрăкланнă асаплă чăваш чĕринчен
Юн тумлать, юн тумлать — хĕрлĕ юн.
Чăваш пуçĕ çинче хуп-хура сивĕ кун
Шăхăрса ахăрать пур енчен...

Çĕр иртсен — ирхи кун хĕвел тухăç енчен
Тĕнчене уяртса, сывлăма
Шăрçапа шăратса кĕмĕл саслăн килсен, —
Ман юратнă çĕршыв вилĕмрен чĕрĕлни,
Вăл асаплă хĕрес çумĕнчен çăлăнни
Пур енчен те сават куçăма.

1921 ç. çĕртмен 16-мĕшĕ
Евпатори

* * *

Чăваш! Чăваш!..
Чăваш! Чăваш!..
Сан ыйăхлă уюсене,
Сан лăпкă кăмăллă, ачаш,
Йăваш-айван ялусене
Савмашкăн манăн халăм çук.
Чăваш тĕнчи çывхарнă чух
Чăвашăн чунĕ йăваш-ши?
Анаслă ыйăхăн ăшши —
Выранлă-ши?.. Выранлă-ши!..

Тăван чăваш хăюллине,
Вăл вăйлине курасчĕ ман.
Чăваш!..
Çĕклен те çунатлан!
Куçна тĕлле хĕвел çине.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Чăвашăн ăсĕ — хурăç пул,
Пăр кас, — ак çирĕп чул —
Ăспа чул кас та вут кăлар!
Чăвашăн ăсĕ! Вут-кăвар,
Хĕртсе хĕретнĕ хурăç пул!

Чăваш! Чăваш!..
Чăваш! Чăваш!..
Çип-çивĕч ухă йĕппилле
Пĕр чашкăрса вĕçсе тĕлле, —
Çут тĕнчене тĕлле — йĕпле.
Чăваш чĕри! Хăюлăх вучаххи
Пулса тăр! Ылтăн шăратан
Хуран пек чашкăрса вĕре.

Чăваш чĕлхи, чăваш чĕлхи,
Хĕвел кăварĕпе вутлан.
Çĕкле часрах тăван çĕре.
Чăваш чĕлхи, çĕлен сăххи,
Хаяр аçа çаппин уххи
Пулса кĕр çĕнĕ ĕмĕре.

Çил-тăвăл килнĕ вăхăтра
Йăр-яр çут çиçĕмĕн ури
Сиксе çӳрет пĕл[ĕ]т хушшипе. —
Çапла тăван çĕршывăмра
Хăюллă пурнăç тымарри
Хăюллă пурнăç таппипе
Пĕр чарăнмасăр таптăр-и!

1921 ç. утăн 5-мĕшĕ
Евпатори

## ÇĔН КУН АКИ

Кăвак çутăран шăратнă ака пуç
Туртийĕ хушшинче хĕвел ташлать.
Çĕн Кун — шевле сарриллĕ ылтăн пуç —
Чăваш уйне ака тума тухать.

Çĕн Кун аки пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри
Касса-касса уй урлă кас тăвать.
Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри
Вилсе выртса пытарăнса пырать.

Çĕн Кун пăхать: ун ылтăн аки пуç
Кăпăшласа хуратрĕ [хытнă] уйсене;
Сип-симĕс улăх урлă тĕпсĕр сив çăлкуç
Уйсем çине савса сапать шывне.

Çĕн кун пин-пин кăварлă хурăç аллипе
Сар-хĕрлĕ кунтăкран уйсем çине
Кăварлă ывăçпа пин, çĕр пин çăлтăр акрĕ.
Ирхи шевле ун хыççăн ылтăн сӳрипе
Çĕр [-çĕр] пин çăлтăрлăн çунан Чăваш Çĕрне
Тĕр тĕрлесе, сӳрелесе пăрахрĕ.

Çĕн Кун акни шăтма вăхăт çитсен,
Çĕн Кун умне хура çĕр айĕнчен,
Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн сарăлса, хăюллăн
Чăваш çыннин кун-çулĕ тухĕ.
Укаллă, ылтăн-кĕмĕллĕ хĕлхемĕ унăн
Кĕсле сасси пулса çĕр тăрăх шуххăн юхĕ.

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хул пуççипе кăвак пĕл[ĕ]те пер[ĕ]нсе,
Кун-çул уйне тухса хĕвел тумтир тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

1921 ç. утăн 7-мĕшĕ
Евпатори

## ТИНĔСЕ

Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн
Çырана çапса, хăюллăн
Хумлă сулнăксемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
Ман çунатлă вутлă чунăм,
Çĕн çĕре чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере.

Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах
Хыççăн-хыççăн хум пăрах.

Тамăк вутлăн, тамăк çутлăн,
Вут-кăварлăн, хар-хаяррăн,
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн
Хутлă хумлăн сулăн-уткăн.
Кĕрешӳ сассипеле —
Вăйлă мĕкĕрлеш саспа
Йăвăр пĕл[ĕ]тсене силле,
Хумсемпе çапа-çапа
Чуллă çырана тапрат,
Хулăм чулсене ташлат.

Тинĕс, тинĕс, — умăнта
Çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ;
Авалхи кунсен ĕречĕ
Ун чунне тапта-тапта,
Ун чунне, чĕри тĕпне
Хурлăхлăх юрри хăварнă.

Тинĕс, тинĕс, эс хаяррăн
Сăвăçăн юнне-чунне
Вăйлă хумлă юрăпа,
Кĕрешме чĕнен саспа
Нишлĕлĕхсенчен тасат.
Вăйлă паттăрлăх, хăват
Вырнаçтар ун чĕрине.
Чунĕ ун хăюллă пултăр,
Тинĕс вăйĕпеле тултăр.
Савтăр паттăрлăх вăйне;
Çĕн куна, çĕн тĕнчене
Юратса çĕн юрă хутăр,
Кĕрешӳ ĕçне-вăйне
Хăй чĕрин хĕвелĕ тутăр.
Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан — ташлатăр, култăр...

Тинĕс, тинĕс, вăл санран
(Вăхăт çитĕ) уйăрлсан,
Савнă çĕршывне кайсассăн,
Йăвăр тимĕр сăнчăртан
Хăтăлнă чăвашсене
Паттăр та хăватлă саслăн,
Чĕрипе çунса, хавассăн

Ҫĕн тĕнчен ҫĕн пурнăҫне,
Ҫĕн кунне, ҫĕн кун-ҫулне,
Ҫĕнĕ пурнăҫ хĕвелне
Юратса тăма калатăр.
Лăпкă халăх — пултăр паттăр.
Вăл йăваш — йăвашлăх ҫĕттĕр,
Чун — кăвар ҫунатлăн вĕҫтĕр
Кив ҫĕртен ҫĕн ҫул ҫине.

Тинĕс, тинĕс, вăйлăраххăн,
Хăвăртраххăн, ҫăмăлраххăн,
Чул пулсан — хăватлăраххăн,
Хыҫҫăн, хыҫҫăн хум хумла!
Эс хăюллăн, вăйлă хумлăн,
Йăвăр саслă, йăвăр чуллăн
Чуллă ҫырана тулла.
Мĕкĕр, ахăр, кар-карла,
Вăйлă сулăмлăн, хăюллăн,
Хыҫҫăн-хыҫҫăн хум пăрах:
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать ман вутлă чунăм...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Ҫĕн тĕнче! Эй, Ҫĕнĕ Кунăм,
Каялла ан кай, ан чак!

1921 ҫ. утăн 12-мĕшĕ
Евпатори

* * *

Инҫе ҫинҫе уйра уяр
Карталанса чăлтăртатать,
Енчен енне ҫупса чупать[1]...
Ҫук, уяр мар — ҫут уйра мар —
Ман ҫамрăк чунлă чĕрере
Хĕвел хĕлхемлĕ хĕлĕхсем
Ҫитмĕл ҫич чĕлĕхлĕн янраҫҫĕ...
Ма чун вылять? Е сар хĕре
Курса киленчĕҫ куҫăмсем,
Е пĕлĕтсем чуна саваҫҫĕ?

Ҫук, ҫук...
Ҫĕршывăм чĕрĕлет!

Пĕчик пӳртсемлĕ ялсенче,
Тăван çĕр урлă уйсенче
Çĕн Сывлăш чун уçса вĕрет.
Çĕн Çул, Кун-çул, Çĕн Кун килет,
Çавна кура кĕвĕллĕ чун,
Кĕсле кĕввиллĕ вутлă юн.
Ман чĕрере уяр ури,
Хĕвел ури, хĕвел юрри,
Тăри юрри! Шевле сарри!

Çĕн Сывлăш, вĕр!
    Çĕн Сывлăш, вĕр!
Чăваш çĕрне тĕреклĕх кĕрт!
Çĕн Сывлăш, вĕр! Çĕнĕ вăй пар,
Чăваш чĕри пултăр кăвар.
Чĕре, выля, çĕн юрă пар!

Инçе çинçе уйри уяр,
Тымарсенче хĕвеллĕн çун!
Хĕвеллĕн çун, кăварлă юн!
Кăвар чĕрем — пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри — пин çын юрри.

1921 ç. утăн 12-мĕшĕ
Евпатори